Çуркунне - студентсемшĕн мĕн тери паха вăхăт… Çуркунне килнипе пĕрлех кашни çул ЧПУра вĕренекенсем хушшинче «Студентсен çурхи уявĕ» ăмăрту-фестиваль иртет. Çултан çул пирĕн чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче вĕренекен студентсем хăйсен пултарулăхне çак уявра ăнăçлă кăтартса ытти факультетсем хушшинче тивĕçлĕ вырăн йышăнса пынă. Кăçал пирĕн факультет филологи, физикăпа математика тата искусство факультечĕсемпе пĕрлешсе пĕр команда - «Квартет Ф» йĕркеленĕ. Çак пĕрлешнĕ тăватă факультетăн студвесна программине, «На Ко(а)нары» ятлăскерне, пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче 18:00 сехетре И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн культура керменĕнче курма май килчĕ.

Команда палăртнă тема вĕр çĕнĕ тееймĕн, анчах ĕмĕрхи кивелмен тема - юрату. Тĕп геройсен, каччăпа хĕрĕн, пĕтĕм пăтăрмахĕ Канары утрав çине канма каяс вырăнне ЧР кĕрекен «Конары» ятлă пысăках мар яла лекнинчен пуçланса каять. Мăн кăмаллă хула хĕрĕ Стелла (Ксения Иванова, филологи факультечĕ) яла лекнишĕн кăмăлсăр пулать, хăйĕн каччине, Валерăна (Костя Рязанов, чăваш филологийĕпе культура факультечĕ), хулана каялла хăвăртрах каврăнас пирки ыйтса тăнтан кăларать. Ял председателĕ яла килнĕ пĕрремĕш туристсене çухатас мар тесе, хаклă хăнасене мĕнпе те пулин кăсăклантарас тĕллевпе чи малтан фокусникăн шоуне курма илсе каять, кайран вара кино курма йыхравлать. Кино тени хальхи пурнăçра вырăнлă «Будущее невозможно без прошлого» темăпа ӳкернĕ видеоролик пулчĕ. Унсăр пуçне ял председателĕ Валерăна хăйĕн Василиса (Анна Куренкова, искусство факультечĕ) ятлă хĕрĕпе паллаштарать, хĕрĕ кăмăлпах туристсене ялти мĕн пур интереслĕ вырăнсене кайса кăтартма килĕшет. Хула майри Стелла кайма килĕшмест. Валерăпа Василиса пурнăç пирки калаçса пĕр чĕлхе тупаççĕ. Хитре, çутă кăмăллă ялти хĕр хула каччин кăмăлне каять, вĕсем хăйсем те сисмесĕрех пĕр-пĕрин патнелле туртăнма пуçлаççĕ, юрату туйăмĕ те çуралать.

Пĕтĕмĕшле илсен, пĕтĕм концерт программи юрату виçкĕтеслĕхĕпе çыхăннă. Хитре те чуна илĕртекен юрăсем, ташăсем, тĕрлĕрен кулăш мыскарисем куракансен кăмăлне çĕклентерчĕç. Çак интереслĕ юрату историйĕ хуларан килнĕ каччă ял хĕрне суйласа илнипе вĕçленет. Укçана хапсăнакан хула хĕрĕ Стелла, каччине мулшăн çеç сырăннăскер, пĕчченех юлать.

Пĕтĕмлетсе çакна каламалла: кăçлхи студвесна интереслĕ те ăнăçлă иртрĕ, тăватă факультет маттурĕсем вĕренӳре çеç мар, сцена çинче те пултаруллă пулнине туллин кăтартса пачĕç теме пултаратпăр.

**Настя Владимирова, 2 курс студентки.**